## П.П.Хусанкайăн «Сăмах хăвачĕ» сăвă пахалăхĕ, тытăмĕ, илемлĕх мелĕсем.

**Сапăрлăх тĕллевĕ**: халăх культурине хисеплеме хăнăхтарасси, çĕр çинчи ырăпа усала уйăрма, çывăх çынсене ырă тума, çынна сăмахпа кӳрентерессинчен пăрăнма, ыр кăмăллă пулма вĕрентесси.

**Пĕлӳ тĕллевĕ:** хайлава тишкерӳ тума, чĕлхе илемне туйма хăнăхтарасси;П.П.Хусанкайăн «Сăмах хăвачĕ» сăввипе В. С. Шефнерăн «Слова» сăввисене танлаштаруллă тишкересси**;**

**Аталантару тĕллевĕ**: поэзи текстне тишкерме хăнăхтарасси, хайлава хак парасси, хăйĕн шухăшне йĕркелесе ыттисем патне çитересси, ачасен шухăшлавне аталантарасси.

**Урок мелĕсемпе меслечĕсем:** учитель сăмахĕ, ушкăнпа ĕçлени, ыйту-хурав, коментариллĕ тата илемлĕ вулав, текстпа ĕçлени, словарь ĕçĕ, хĕвеллĕ кластер, синквейн, икĕ енлĕ дневник, лото.

**Пуплеве аталантарас хăнăхусем**: панă ыйтусене тĕрĕс хуравлама, пуплевпе шухăша тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтарасси.

**Словарь *ĕçĕ:*** хăват – вăй

хĕрлĕ хурçă – хĕртнĕ тимĕр;

маяк – шывра çул кăтартакан хатĕр, çĕрле çутатса тăрать;

вут юпа – çул çинче хăш еннелле каймаллине кăтартакан юпа;

**Усă курмалли хатĕрĕсем:** компьютор, проэктор, экран, П.П.Хусанкайăн «Сăмах хăвачĕ» сăввипе В. С. Шефнерăн « Слова» сăввисен тексчĕ, лото вылямалли сăмахсем(16), лото хăми, ыркăмăллăх йывăçĕ, çулçăсем, фишкăсем (сарă 3, хĕрлĕ 3, кăвак 3, симĕс 3, шупка 3)

**Курăмлăх хатĕрĕсем:** П.П.Хусанкайпа В. С. Шефнерăн сăн ӳкерчĕкĕсем, слайдсем (П.П.Хусанкайпа В. С. Шефнерăн пурнăçĕнчи паллă самантсемпе паллаштарни 3, Килти ĕçе тĕрĕслени – 4-6, Сăмах мĕн тăвать? -7, Сăмах мĕнле? -8, Сăмах мĕн вăл? -9, Хайлава тишкерни – 10-11, Сăвăри илемлĕх мелĕсемпе лото – 12, Киле ĕç-13)

**Урок тĕсĕ:** хайлава тишкермелли хутăш урок

### Урок юхăмĕ

**Урока йĕркелени** 1. Ачасене сывлăх сунни

**2.** Урока йĕркелени. Класри 15 ача, партăсене 3 ушкăн валли лартнă: кашни ушкăнрах сарă, хĕрлĕ, кăвак, симĕс, шупка фишкăсем. Ку фишкăсем кам хыççăн кам хуравлас йĕрке валли кирлĕ (1 ĕçре сарă, 2 – хĕрлĕ, 3 – кăвак, 4 – симĕс, 5 – шупка кам хуравлаймасть пулăшать)

**Урок темине палăртассси**.

Учитель сăмахĕ: Эп сире пĕр хайлав каласа паратăп, çав хайлавра паянхи урок теми пытаннă. Тимлĕ итлĕр.

«Пĕррехинче Ăсчах хăйĕн вĕренекенĕсемпе сăмах вăйĕ çинчен калаçу пуçланă. Кашниех çав хăватлă вăя алла илме ĕмĕтленнĕ. Вĕренекенсем тимлĕ итленĕ, анчах пурте ăна шанман: пĕрисем йĕкĕлтевлĕн кулса илнĕ, теприсем тарăн шухăша кайнă, хăшĕсем çакна тĕрĕслесе пăхмалли мел шыранă.

Ăнсăртран хыçалта ларакан ача хыттăн кăшкăрса янă:

- Эсир суя калаçатăр. Турă ятне пĕрмаях асăннипе Турра куçаймастăн? Çук нимле вăй та сăмахăн!

-Лар хăв вырăнна, Ухмах, - пӳлнĕ ăна Ăсчах.

Хăйне халăх умĕнче «ухмах» тесе кӳрентернишĕн тарăхса кайнипе Ăсчаха тем каласа та кӳрентернĕ. Кӳренӳ унăн ăсне пăхăнман. Ăсчах ăна пӳлмесĕр итленĕ. Кăшт тăхтасан хăй кӳрентернĕ çын çине айăплăн пăхса:

- Каçарăр мана, сире кӳрентертĕм. Эпĕ тĕрĕс тумарăм.

Вĕренекен лăпланчĕ. Ăсчах вĕренекенсем çине тимлĕ пăхса илчĕ те каларĕ:

- Эп сире сăмах вăйĕ çинчен каланине çирĕплетрĕмĕр те. Пĕр сăмахшăн этем тарăхса кайрĕ, тепринпе - лăпланчĕ.

- Сирĕн шутпа, урок теми мĕнле пулмалла-ши?

- Сăмах çинчен пулмалла.

- Сӑмахсем мӗнлисем пулаççӗ?
- Кӳрентерекеннисем, савӑнӑçлисем.
- Маттур. Ачасем, тетрадьсене уçӑр та паянхи числона, урок темине çырса хурӑр.

### *П.П.Хусанкайӑн «Сӑмах хӑвачӗ» сӑввиинчи сӑмах вӑйӗ*

***Урок тӗллевӗпе паллаштарасси***

- Çак ӳкерчӗксенче пирӗн паянхи урок тӗллевӗ пытаннӑ. Мӗнле пулмалла-ши урок тӗллевӗ.
- Тӗрӗс. П.П.Хусанкайӑн «Сӑмах хӑвачӗ» сӑввипе В. С. Шефнерӑн «Слова» сӑввисене танлаштарса тишкересси.

***Урок эпиграфӗпе паллаштарасси.***

Ыр сӑмах калама ан ӳркенӗр.
Ыр сӑмах – ырӑ вӑрлӑх пекех**…**

**I Çӗнӗ темӑна ӑнлантарни**

**1. П.П.Хусанкайӑн «Сӑмах хӑвачӗ» сӑввипе паллашни.**

а) Учитель вулани:

ӑ) Ачасем ылмашӑнса вулани**.**

**2. Вырӑс литературисен сӑввипе танлаштарни.**

**а)** П.П.Хусанкайпа В. С. Шефнерӑн пурнӑçӗнчи паллӑ самантсемпе паллаштарни

- Çакӑн пек шухӑшлӑ савӑ вырӑс литературинче пур-ши? Вӑл мӗн ятлӑ? Ӑна кам çырнӑ?
- Пур. В. С. Шефнер çырнӑ, «Слова» ятлӑ.

- Тӗрӗс. Атьӑр-ха малтан П.П.Хусанкайпа В. С. Шефнерӑн пултарулӑхӗ çинче чарӑнса тӑрар.



Петр Петрович Хусанкай
(1907-1970)

1907-мӗш çулхи январь уйӑхӗнче Тутар Республикинчи Сиктӗрме ялӗнче, чухӑн хресчен çемйинче çуралнӑ.

1924 çулта Шупашкарта тин уçнӑ «Сунтал» журналӑн пӗрремӗш номерӗнче Хусанкайӑн виçӗ сӑвви пичетленет.

Хусанта вӗреннӗ вӑхӑтра Шупашкарта пӗрремӗш кӗнеки — «Уяртсан» пичетленсе тухать.

1950-1951 çусенче «Чӗре юрри» поэма çырнӑ, çав çулах пичетленсе тухнӑ. Поэма виçӗ пайран тӑрать: Икӗ ят, Çамрӑксен кӑмӑлне, Эп сӑмах хӑватне ӗненетӗп.
«Сӑмах хӑвачӗ» хӑй 7 сыпӑран тӑрать.



Вадим Сергеевич Шефнер
(1915-2002)

В 1915 году 15 января В. С. Шефнер в Петрограде в семье пехотного офицера.

1933 году в заводской газете было напечатано первое стихотворение.

В 1940 году в ленинградском издательстве «Советский писатель» вышла первая книжка стихов — «Светлый берег».

В 1956 году написал стихотворение «Слова»

Хусанкай сӑввисене чӑвашла, вырӑсла, тутарла, пушкӑртла, грузинла, украинла, пӑлхарла тата ытти нумай халӑхсен чӗлхипе пичетленнӗ. Икӗ чӗлхеллӗ поэт теççӗ Хусанкая. Вӑл вырӑсла та пайтах çырнӑ. Пӗлессе вара нумай чӗлхе пӗлнӗ. 177 поэт хайлавне чӑвашла куçарнӑ:

В.Шекспир, Ш.Руставелли, И.Вазов, М.Горький, В.Маяковский, Т.Шевченко, Я.Райнис, Н.Бараташвилли... т.ыт.те

**Килти ĕçе тĕрĕслени. Таблицăллă кластерсене пĕтĕмлетни**

**1-мĕш ушкăн «Сăмах хăвачĕ» сăвăри ăнланман сăмахсене ăнлантарать**

**Хăват** – вăй
**хĕрлĕ хурçă** – хĕртнĕ тимĕр;
**маяк** – шывра çул кăтартакан хатĕр, çĕрле çутатса тăрать;
**вут юпа** – çул çинче хăш еннелле каймаллине кăтартакан юпа

**2-мĕш ушкăн П.П.Хусанкайăн «Сăмах хăвачĕ» сăввипе хатĕрленĕ таблицăллă кластерпа паллаштарать**

| **çавра** | **япала ячĕ** | **паллă ячĕ** | **Глагол** |
|---|---|---|---|
| 1 çаврăм | сăмах<br>хăват<br>сăмах – па<br>этем – е | | ĕнен – етĕп<br>пĕлтерет – еп<br>амант – ма<br>пул – ать<br>ӳкер – ме<br>ӳк – нине<br>çĕкле – ме |
| 2 çаврăм | сăмах – а<br>хурçă – н<br>тус – шăн<br>тăшман – а | хĕрлĕ<br>ăшшине<br>ырă | пĕл – еп<br>хĕмлет – се<br>хыптар – сассăн<br>пар – ать<br>кас – са<br>пăрах – ать |
| 3 çаврăм | сăмах<br>чĕре – пе<br>чун – па<br>юн – па<br>ĕмĕр – семшĕн<br>маяк<br>юпа | чăн<br>çутă<br>вут | ӳстер – етĕн<br>пул – ать |
| | 4 сăмах | | 2 пĕл<br>2 пул |

**3-мĕш ушкăн В. С. Шефнерăн «Слова» сăввипе хатĕрленĕ таблицăллă кластерпа паллаштарать**

| **Имя существительное** | | **Имя прилагательное** | **Глагол** | |
|---|---|---|---|---|
| Слов | земле | Много | Сквозит | вспоминаем |
| Слова | небо | дневные | не сдаются | не берут. |
| Синева | слова | весеннего | Убить | спасти, |
| Днем | улыбкой | ночные | Повести | можно |
| Стыдом | слова | сладким | Продать | предать |
| Раны | слова | разящий | Купить | перелить. |
| Суд | плен | каждом | Повторять | не смею |
| Плен | словом | горящем | Твердит | не верю |
| Словом | словом | высоком | Позабудет | вспомнит |
| Полки | словом | гордых | забудет | хочет |
| Слово | свинец | бесчисленный | нажиться | оскорбляет |
| слова | словам | темных | Не твердя | умирали |

| | | |
|---|---|---|
| языке слава<br>Родина верность,<br>Свобода честь.<br>Шагу знамена<br>Чехле душе<br>Огне дыму<br>Мосту посту<br>Словах героев<br>Прах лесах<br>Траншеях слов<br>Монетой эталоном<br>сердце слугами<br>быту чистоту<br>радость буря<br>горе ночь,<br>слова | сырых,<br>разменной<br>Золотым<br>мелком<br>изначальную | не служат храни<br>не делай береги<br>Могут помочь! |
| 15 слов 2 плен | | 2 убить |

**- Ачасем, паян урока пурте лайăх хатĕрленĕ. Атьăр-ха хамăра ал çупса хавхалантарар. Маттур та эсир.**

**II Çирĕплетӳ тапхăрĕ**

1. **Хĕвеллĕ кластер**

**1-мĕш ушкăн Сăмах мĕн тăвать?**






## 2 ушкăн  Сăмах мĕнле вăл ?







## 3 ушкăн  Сăмах мĕн вăл ?






**Ачасем, эсир питĕ кĕске хушăра нумай ĕç туса ĕлкĕртĕр. Атьăр-ха хире-хирĕç пăхса кулса пĕрне-пĕри тав тăвар.**

2. **Хайлава тишкерни**
   **1 ушкăн Синквэнйн çырать.**

Сăмах
ырă, чăн
амантать, хĕмлентерет, ÿстерет.
Ырă чăн сăмах амантать, хĕмлентерет, ÿстерет -
Маяк.

**2 ушкăн Икĕ енлĕ дневник çырать.**

| **текстран илнĕ сăмахсем** | **эпĕ вĕсене мĕнле ăнланатăп** |
|---|---|
| сăмахпа этеме амантма та пулать, ÿкерме те, ÿкнине те пулать çĕклеме. | |
| сăмаха хĕрлĕ хурçăн хĕмлетсе хыптарсассăн кăна вăл парать ăшшине | |
| сăмах касса пăрахать тăшмана | |
| сăмаха ÿстеретĕн чĕрепе те, чунпа та юнпа вăл пулать ĕмĕрсемшĕн – çÿлти çутă маяк, вут юпа. | |

**3 ушкăн ыйтусене хуравлать.**

1. **У** Мĕн çинчен çырать автор сăвăра?
В. Сăвăра автор сăмах вăйĕ çинчен çырать.
2. **У** Мĕнле проблеми хускатнă-ши Хусанкай ку сăвăра?
В. Ăшă сăмахпа сивĕ сăмах, суя сăмахпа чăн сăмах проблеми.
3. **У** Сăвă хавхи мĕнле?
В.Автор ку сăвва çĕкленуллĕ туйăмпа, чăн сăмаха ырласа çырнă.
4. **У** Мĕнле сăвă виçипе çырнă çак сăвва? - Çак сăвва 3 сыпăклă анапест виçипе çырнă.
5. **У** Сăвăра миçе йĕрке тата миçе çавра?
В. Çак сăвăра пурĕ 12 йĕрке, 3 çавра, кашни çаврара 4-шар йĕрке.
6. **У** Автор сăвăра мĕн каласшăн пулнă?
В. Ман шутпа Хусанкай пире яланах тĕрĕс сăмах каламалла, нихăçан та улталамалла мар тесе каласшăн пулнă.

3. **Атьăр-ха П.П.Хусанкайăн «Сăмах хăвачĕ» сăвăри илемлĕх мелĕсемпе лото выльăпăр.**

**Усă курмалли:** ырă тус**,** хĕрлĕ хурçă, чăн сăмах, çутă маяк, вут юпа, сăмахпа этеме амантма та пулать ÿкерме пулать, ÿкнине те пулать çĕклеме, хĕмлетсе хыптар, ăшине парать, касса пăрахать, ÿстеретĕн чĕрепе те, чунпа та, юнпа,

| | | | |
|---|---|---|---|
| **эпитет** | **метоними** | **метафора** | **сăпатлантару** |
| **метоними** | **метафора** | **танлаштару** | **метоними** |
| **метафора** | **метоними** | **эпитет** | **метафора** |
| **эпитет** | **метоними** | **метафора** | **метоними** |

**Эпитет** – ырă тус,

**метафора** – хĕрлĕ хурçă, чăн сăмах, çутă маяк, вут юпа

**метоними** – сăмахпа этеме амантма та пулать ÿкерме пулать, ÿкнине те пулать çĕклеме, хĕмлетсе хыптар, ăшине парать, касса пăрахать, ÿстеретĕн чĕрепе те, чунпа та, юнпа

**танлаштару**

**сăпатлантару**

**- Урок эпиграфĕ патне таврăнар.**

*Ыр сăмах калама ан ÿркенĕр.*
*Ыр сăмах – ырă вăрлăх пекех…*

Урок эпиграфĕ пире мĕн тума хушать? Атьăр-ха çак шухăша аталантарса ыркăмăллăх йывăçĕ çитĕнтерер. Унта ырă, ăшă, kaçру сăмахĕсем çитĕнеççĕ. Пĕр-пĕрне ырă сăмах калăр, кама та пулин кÿрентертĕр пулсан kaçру ыйтма ан манăр.

Ачасене çулçăсем валеççе тухатăп, унта сăмахсем çырса йывăç çине çыпăçтараççĕ. Эпĕ çав вăхăтра хам çырнă «Ылтăн чĕре» сăвва вулатăп.

Ылтăн чĕрен пилĕк тĕслĕ талант.
Пĕрремĕш таланчĕ – ырă сăмах.
Ырă сăмах вăл - чăнах та, ахах
Унăн çутийĕ чуна ăшăтать.

Иккĕмĕш таланчĕ – тĕрĕс сăмах,
Тĕрĕс сăмах ырă вăрлăх акать.
Санăн ятна та чыспа вăл усрать
Ултав суяна пăрать аякках.

Виççĕмĕш талант – аттепе анне
Кашни ачашăн – хĕвелпе тĕнче.
Тĕнче тĕнĕлне те вăл çавăрать,
Пурнăç илемĕ унра упранать.

Т(ă)ватăмĕш таланчĕ – паттăрлăх, ĕç.
Чунпа та, юнпа та унта эсĕ пиç.
Ĕçлĕ этем малалла талпăнать,
Унăн ăсталăх чунра туптанать.

Пиллĕкмĕш таланчĕ – сăваплă сăмах
Йывăр чухне те çӳретĕр çумрах.
Ырă та çутă, ăш пиллĕ сăмах –
Чунри тасалăх упрантăр унрах.

Киле ĕç

1. Сăмах синчен ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсем.
2. Сăмах синчен сăвă е калав çырма.
3. Сăвва илемлĕ вулама.
4. Ыркăмăллăх çинчен красворд.